27-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 МАЙ 17 ЮНКУН 97(6592) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Ҫураки ĕҫĕсене большевикла ертсе пымалла

Уяр та ăшă кунсем тăраҫҫĕ. Тăпрари пӳрлĕх хăвăрт типет. Ҫуртыррисем акмалли чи лайăх вăхăт иртсе пырать. Апла пулин те республикăра ҫураки ĕҫĕсем пачах та ҫителĕксĕр пулса пыраҫҫĕ-ха. Майăн 14-мĕшĕ тĕлне республикăри колхозсем ҫуртыррисем акмалли плана 34 процент ытларах ҫеҫ пурнăҫланă.

Ҫураки ĕҫĕсем вăрахăн пыни, чи малтанах, чылай районсен руководителĕсем, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсемпе райисполкомсен председателĕсем, МТС-сен директорĕсемпе райҫĕрĕҫ пайĕсен заведующийĕсем колхозсенче ҫураки ĕҫне сӳрĕк ертсе пынипчен, вĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 ҫулхи ялхуҫалăх ĕҫĕсен планĕ ҫинчен» йышăннă постановление начар пурнăҫа кĕртсе пынинчен, ҫав постановление пурнăҫлама ялти коммунистсемпе комсомолецсене, колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе трактористкăсене ҫителĕксĕр мобилизацилениничен килет.

Улатăр, Кувакино, Ҫĕмĕрле, Советски, Канаш, Йĕпреҫ, Ишлей районĕсен руководителĕсем ҫураки ĕҫĕсене хăвăртлатмалли майсемпе пурипе те усă курмаҫҫĕ-ха. Вĕсем ҫуракин малтанхи кунĕсенче ĕҫ сӳрĕклĕхне «тăпра чĕррипе» витме пăхатчĕҫ. Халĕ ĕнтĕ тăпра чĕрĕ теме ҫук, ҫавăнпа та вĕсем «туртăм вăйĕ ҫитменни» ҫине йăвантараҫҫĕ.

Паллах, туртăм вăйĕ енчен йывăрлăхсем ҫук мар, анчах вĕсем пур пек туртăм вăйĕпе те тивĕҫлипе усă курмаҫҫĕ-ха. Йĕпреҫ районĕнчи «Герой» колхозра, сăмахран, пĕр кун хушшинче 9 лашапа та 1,5 гектар ҫеҫ сухаланă.

Уйрăмах тракторсемпе кирлĕ пек усă курманнине палăртмалла. Ҫĕмĕрле, Шăмăршă районĕсенче пуринчен ытларах газогенераторлă тракторсем ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем валли чуркăсем выравтах ҫителĕклĕ хатĕрлеме май пур. Апла пулин те Шăмăршăпа Ҫĕмĕрле районĕсен руководителĕсем тракторсем ҫителĕксĕр ĕҫленине халĕ те ҫунтармалли япаласем ҫитмен сăлтавпа ăнлантарма пăхаҫҫĕ.

Йĕпреҫ районĕ майăн 15-мĕшĕ тĕлне ҫуртыррисем акмалли плана 26 процент ҫеҫ пурнăҫланă. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Сидоров юлташ «вăрман сывăхĕнчи колхозсенче тăпра писсе ҫитмен-ха» тесе пурăнать. Унти вăрман сывăхĕнчи колхозсен хирĕсем район акса хăваракан мĕнпур лаптăкăн виҫĕ пайĕнчен пĕр пайне ҫеҫ йышăнаҫҫĕ, ытти колхозсем — хирти колхозсем. Ҫапла ĕнтĕ «вăрман сывăхĕнчи колхозсем» нимӗнле те пĕтĕм район сӳрĕк ĕҫленине сăлса хăварма пултараймаҫҫĕ. Халĕ вăрман сывăхĕнчи колхозсенче те ака ĕҫĕсене, анлăн сарса яма май пур, сарса ямалла та. Йĕпреҫ районĕн руководителĕсен, тĕрлĕ сăлтавсем шыраса хаклă вăхăта иртеричен, халех пикенсе ĕҫлеме пуҫламалла.

Икĕ эрне каярах ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ, Канаш тата Красноармейски районĕсенче ҫураки ĕҫĕсем мĕнле пыни ҫинчен сӳтсе-явса, ҫураки ĕҫĕсене тĕпрен хăвăртлатма, ĕҫри ҫитменлĕхсене пĕтерме хушнăччĕ. ВКП(б) Обком бюровĕн постановленине пурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе Красноармейски район руководителĕсем чăннипех те большевикла кĕрешрĕҫ. Красноармейски район ҫуракинче малта пыракансен ретне тăчĕ, машинно-тракторнăй станци (директорĕ А. Константинов юлташ) ҫураки вăхăтĕнче тумалли ĕҫсен планне пурнăҫларĕ. Районри 28 колхоз пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерчĕ.

Унти руководительсем ВКП(б) Обком бюровĕ кăтартса панинчен хăйсене валли тивĕҫлĕ вывод турĕҫ, ҫуракине кăтартуллăн иртерес тĕлĕшпе оперативно ĕҫлеме пуҫларĕҫ. Анчах Канаш районĕн руководителĕсем (ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Добродушев юлташ) ҫав постановление пурнăҫа кĕртессишĕн ку таринччен кирлĕ пек кĕрешеҫҫĕ теме ҫук-ха. Район ҫуртыррисем акмалли плана 38 процент кăна пурнăҫланă. Майăн 14-мĕшĕнче вăл 318 гектар акнă. Малашне те ҫавăн пек вăрахăн аксан, район ҫуракине татах 18—20 куна тăсма пултарать. Анчах канашсене ҫуракине вăраха тăсма никам та ирĕк паман, парас та ҫук. Ҫавăнпа та парти райкомĕпе райисполкомăн ҫураки ĕҫĕсене хăвăртлатас тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнмалла.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ районсене кашни кун мĕн чухлĕ акмаллине кăтартса ҫирĕп заданисем пачĕ. Ҫав заданисене ăнаҫлăн пурнăҫа кĕртни ҫураки ĕҫĕсен хăвăртлăхне ӳстерме, ҫуракине кĕске срокра туса иртерме пулăшать. **Кулленхи заданисене пурнăҫа кĕртессишĕн кашни районпа колхозăн, МТ Станцин мĕнпур вăя хумалла.** Анчах ҫав заданисене ҫуракинче малта пыракан Чурачăк, Ҫĕрпӳ, Вăрнар районĕсем ҫеҫ пурнăҫласа пыраҫҫĕ-ха. Чурачăк районĕ ҫуртыррисем акмалли плана 59,2 процент пурнăҫланă. Районăн кашни кун 600-шер гектар акмалла. Майăн 13-мĕшĕнче унта 592 гектар, майăн 14-мĕшĕнче — 600 гектар акнă.

Кулленхи заданисене пĕр пăркаланмасăр пурнăҫласа пырсан, кашни районах ҫураки ĕҫĕсене нумай хăвăртлатма пултарать. Тĕслĕхе, ҫуракинче пуринчен малта пыракан Калинино районнех илер. Вăл ҫуртыррисем акмалли плана 61,5 процент тултарнă. Ҫапах та район ҫураки ĕҫĕсене хăвăртлатмалли мĕнпур майсемпе усă курнă теме ҫук-ха. Ҫакна кулленхи задание пурнăҫласа пымании те яр-уҫăн кăтартса парать.

Елчĕк районĕнче ҫураки ĕҫĕсен хăвăртлăхне уйрăмах ӳстермелле. Ҫак районăн хăшпĕр районсенчен икĕ хут ытларах акса хăвармалла. Паянхи кун тĕлне 11.316 гектар акса, ҫураки планне сурри ытларах пурнăҫланă. Сеялкăсемпе 7.157 гектар акнă. Районăн планпа кашни кун 1000 гектар акмалла, анчах вăл 600—700 гектар ҫеҫ акса пырать-ха. Ĕҫ хăвăртлăхне ӳстермесен, ҫураки Елчĕк районĕнче те вăраха тăсăлма пултарать.

Ҫураки ĕҫĕсене хăвăртлатнипе пĕрлех пахалăх ҫине те тимлĕн ҫавăрăнса пăхмалла. **Агротехника хушнисене пĕр пăркаланмасăр пурнăҫласа пымалла.** Анчах чылай районсенче, уйрăмах Советски, Ишлей, Ҫĕмĕрле районĕсенче, тырăсене алăпа акса, агротехникăна пăсаҫҫĕ. Советски район ҫураки пуҫланнăранпа сеялкăсемпе пурĕ те 173 гектар кăна, майăн 14-мĕшĕнче вара пĕр гектар кăна акнă. Районра 190 сеялка. Ҫакă вăл район руководителĕсем машинăна хирĕҫле шухăш-кăмăлсемпе ҫителĕксĕр кĕрешнине кăтартса парать.

Халĕ ĕнтĕ ҫураки ăнаҫлăхне тракторсемпе тата колхозсенчи пĕтĕм туртăм вăйĕпе туллин усă курма пултарни, колхозниксемпе трактористсем ĕҫ нормине массăллăн тултарса, иртерсе тултарса пыни, ҫуракине большевикла ертсе пыни татса парать. Ҫуракине кăтартуллă иртерессишĕн колхозлă ялсенче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту хăватлăн сарăлса кайрĕ. Ялти партипе совет организацийĕсен колхоз крестьянĕсене вăйлă тырпуллăн кĕрешме социализмлă ăмăртăва анлăн явăҫтармалла, хăйсен ăмăртăва пуҫарса, ертсе пымалла. Уйхирте ĕҫлекенсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕҫе кăтартуллă йĕркелемелле. Коммунистсемпе комсомолецсен, ҫуракинче малта пырса, ытти колхозниксемпе трактористсене пример кăтартмалла. Малта пыракансен опытне сармалла. Ку ĕҫре районри хаҫатсен уйрăмах пысăк ĕҫ пуса иртермелле.

Ялти коммунистсемпе комсомолецсемшĕн халь ҫуракине кĕске срокра, лайăх пахалăхпа иртерес ĕҫрен хисеплĕрех та кирлĕрех ĕҫ урăх ҫук та. Колхозлă ялăн мĕнпур вăйне ҫуракине кăтартуллăн иртерме мобилизацилер!

Уругвайăн Чрезвычайнăй Посланникĕ тата Полномочнăй Министрĕ Э. Фругони господин хăйĕн верительнăй грамотисене СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне М. И. Калинин юлташа пани

Майăн 12-мĕшĕнче Кремльте СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Уругвайăн ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй Посланникĕ тата Полномочнăй Министрне Э. Фругони господина йышăннă. Э. Фругони господин М. И. Калинин юлташа хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Э. Фругони господинпа пĕрле Мисси Секретарĕ М. Хаупареа господин тата Мисси Атташи Л. Крус господин пулнă. Посланник М. И. Калинин юлташа ҫав сотрудниксемпе паллаштарнă.

Верительнăй грамотăсене панă чухне СССР Ют ҫĕршыв Ĕҫĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин юлташ, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн заведующийĕ Ф. Ф. Молочков юлташ тата СССР Наркоминделĕн Америка ҫĕршывĕсен отделĕн заведующийĕ С. К. Царапкин юлташ пулнă.

Верительнăй грамотăсем илне хыҫҫăн М. И. Калинин юлташ Э. Фругони господинпа каласнă.

Шăхасанпа Красноармейски МТС-сем ҫураки ĕҫĕсен планне тултарчĕҫ

Социализмлă ăмăртăва анлăрах сарар, малтисемпе танлашар!

28 КОЛХОЗ ТĔШТЫРĂСЕМ АКСА ПĔТЕРНĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 16-мĕшĕ. (**Телефонпа, хамăр корр.**). Районри колхозсем майăн 14-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 7.633 гектар сухаланă, 6.653 гектар акнă, вĕсенчен машинăсемпе 2.345 гектар акнă. Паянхи кун тĕлне 28 колхоз тĕштырăсемпе пăрҫа йышши культурăсене акса пĕтернĕ, ҫĕрулми тата техникăллă культурăсем акма тытăннă.

Ҫураки ĕҫĕсене «Янмурзино», «Чувашия», «Красноармеец», «Жнейка», Калинин тата Тельман ячĕсемпе тăракан колхозсем пуринчен те лайăхрах туса иртернĕ. «Янмурзино» колхоз пĕтĕм тĕштырăсенчен 75 процентне машинăсемпе акнă.

Итмар ялсоветĕнчи сулĕрепех кая юлса пынă колхозсем те кăҫалхи ҫул аван ĕҫлерĕҫ. Ҫак ялсоветĕнчи «Чувашия», «1-ое Мая», «14 лет Октября» колхозсем ҫуртыррисене акса пĕтерсе, ҫĕрулми лартма тытăнчĕҫ. Вĕсенчен кашни ĕнтĕ 3—5-шер гектар ҫĕрулми лартнă. Ҫавăн пекех «Чамыш», «Пахарь» колхозсем те ака пĕтерсе, ҫĕрулми лартма тытăннă.

Анчах хăшпĕр колхозсем ҫаплах юлса пыраҫҫĕ-ха. Уйрăмах Карай ялсоветĕнчи «Красная Звезда», «Большевик», Войков ячĕпе тăракан колхозсем начар ĕҫлеҫҫĕ. «Большевик» колхозăн пĕтĕмпе 189 гектар тĕштырă акмалла, вăл паянхи куна 35 гектар кăна акнă-ха. Ҫав колхоза пулăшма МТС-ран 3 трактор янă. «Красная Звезда» колхоз та 202 гектартан 63 гектар кăна акнă. Кунта ҫаплах ҫĕр тачка тесе ĕҫе тытăнмасăр тăнă.

С. ШАДИН.

Малта пыракан колхозсем акса пĕтереҫҫĕ

КАЛИНИНО, майăн 15-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Районра малта пыракан колхозсем пĕрчĕллĕ тата пăрҫа йышши тырăсене акса пĕтереҫҫĕ. Паянхи кун тĕлне 8920 гектар акнă. «Броневик», «Ҫĕн ял», «Красноармеец», «Знамя труда», «Трактор», «Пучах», «Коминтерн», «Алма», «Красная Звезда» колхозсем тĕштырăсене районра пуринчен малтан акса пĕтерчĕҫ.

«Броневик» колхоз кăҫал ҫуракине питĕ пысăк пахалăхпа туса иртерчĕ. Кунта пĕтĕмпех сеялкăпа акнă. Уйрăмах 3-мĕшпе 4-мĕш бригадăсем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕҫ. Кирилл Сорокин бригадир ака вăхăтĕнче хиртен кĕмесĕр ĕҫлерĕ. А. Петрова, А. Васильева сухаҫăсем кашни кунах ĕҫ нормине 150-шар процент тултарса пычĕҫ. П. Петрова, С. Федорова акакансем 4 гектар вырăнне кулленех 5-шер гектар акатчĕҫ. Халĕ кунта ферма ҫумĕнчи участока акма тытăнчĕҫ. Паянхи куна 2 гектар выльăх кăшманĕ акнă. Халĕ пахча-ҫимĕҫсем — кишĕр, чĕкĕнтĕр тата ыт. те акаҫҫĕ. Ҫар сынниесен семьисене пулăшмалли фонд валли паян 2 гектар урпа акрĕҫ. Колхозниксен килти вырăнĕсене сухалама тытăнчĕҫ. Чи малтанах фронтовик семьисен килти вырăнĕсене сухалаҫҫĕ. Ҫак кунсенче ҫĕрулми лартма тытăнаҫҫĕ. «Знамя труда» колхоз тĕштырăсене акса пĕтернĕ хыҫҫăн выльăх апачĕ валли кăшман тата кишĕр акрĕ. Халĕ кунта та ҫĕрулми лартмалли вырăнсене сухалаҫҫĕ. Колхоз ака ĕҫне ăнаҫлăн вĕҫленин тĕп сăлтавĕ — кашни колхозник пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕҫленинче.

Анчах та районра япăх ĕҫлекен, районa малти вырăна тухма чăрмантаракан колхозсем те пур-ха. Сталин ячĕпе тăракан колхоз ака ĕҫне чăтма ҫук вăрăма тăсать. Кунта колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантарулă ĕҫе начар йĕркеленĕ. Колхозниксем хушшинче уйрăм сдельщинăпа ĕҫлессине организацилемен, ҫавăнпа кам мĕнле хăвăртлăхпа, мĕнле пахалăхпа ĕҫленине пĕлме ҫук. Ăмăрту ҫинчен сăмахпа ҫеҫ шавлаҫҫĕ. Ҫак колхоза кăҫал вăрлăхпа выльăх апачĕ парса та пулăшнă. Колхоз председателĕ Иванов юлташ акара ĕҫ вăйне вырнаҫтарма пĕлмест, ĕҫе конкретнă ертсе пымасть.

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) Райкомĕн секретарĕ.

Нормăран иртерсе сухалаҫҫĕ

МУРКАШ, майăн 10-мĕшĕ. (**Телефонпа**). «Труд» колхозри комсомолецсемпе ҫамрăксем хăйсем илнĕ обязательствăсене ăнаҫлăн пурнăҫлаҫҫĕ. Отечественнăй вăрҫă инваличĕ Н. Васильев юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригадăри комсомолецсемпе ҫамрăксем ҫуракинче пурте тенĕ пекех кулленхи ĕҫ нормипе 115—140-шер процент тултараҫҫĕ. Сăмахран, допризывник Петр Петров икĕ касăллă плугпа куппе 1 гектар сухалас вырăнне 1 15—1,20 гектар сухалать.

— Хĕрлĕ Ҫара стахановец пулса кайма тăрăшатăп. Вăя шеллемесĕр ĕҫленипе ҫуракине кĕске срокра тата лайăх иртерхе пулăшатăп, — тет вăл.

И. ГРИГОРЬЕВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.



Ҫуракине иртерес ĕҫре тухăҫлă та паха ĕҫленĕшĕн ВКП(б) Красноармейски райкомĕпе ĕҫҫынни депутачĕсен районри совечĕн исполкомĕ тăратнă тăрăх, ялхуҫалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми ҫине кĕртнĕ:

3. Тракторсен 9-мĕш номерлĕ бригади (бригадирĕ **Е. И. Иванов** юлташ) ҫак бригада ҫуркунне тракторпа тумалли ĕҫсен планне 113,6 процент тултарнă, планпа пăхнă 220 гектар вырăнне 250 гектар сухаланă. Трактористкăсем **Е. Н. Николаева, С. А. Арсентьева, С. П. Иванова, Т. А. Алексеева** юлташсем 6—7-шер гектар сухаланă.

4. Тракторсен 4-мĕш номерлĕ бригади (бригадирĕ **Можаров** юлташ) планпа пăхнă 253 гектар вырăнне 270 гектар сухаланă, ҫав вăхăтрах 137 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Трактористкăсем **Е. Е. Ефимова, В. Г. Гаврилов, А. А. Можарова** юлташсем 5 гектартан пуҫласа 7 гектара ҫити сухаланă.

5. Тракторсен 10-мĕш номерлĕ бригади (бригадирĕ **А. М. Мокеев** юлташ) плана 102 процент тултарнă, 220 гектар вырăнне 225 гектар сухаланă. Трактористсем **Л. Н. Никитин, Е. В. Семенова** юлташсем 6 гектартан пуҫласа 7 гектара ҫити сухаланă.

6. Тракторсен 12-мĕш номерлĕ бригади (бригадирĕ **П. В. Владимиров** юлташ) ҫуркунне тракторсемпе тумалли ĕҫсен планне 101,1 процент тултарнă.

Плана иртерсе тултарассишĕн кĕрешетпĕр

ШАХСАН, майăн 16-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Паян машинно-тракторнăй станци ҫуркунехи трактор ĕҫĕсен планне тултарчĕ. Стахановла ĕҫлен чи лайăх тĕслĕхĕсене ҫак бригадăсем кăтартрĕҫ: 6-мĕш бригада (бригадирĕ **Н. Тимофеев** юлташ), 1-мĕш бригада (бригадирĕ **Я. Сергеев** юлташ), 8-мĕш бригада (бригадирĕ **Н. Чернов** юлташ), 4-мĕш бригада (бригадирĕ **Н. Александров** юлташ). МТС коллективĕ куҫса ҫӳрекен Хĕрлĕ Ялава хăйĕн аллинчех хăварассишĕн, республикăри машинно-тракторнăй станцисем хушшинчи малти вырăнта тăрассишĕн кĕрешет.

Н. КОНСТАНТИНОВ.
Шăхасан МТС-ĕн директорĕ.

Пирĕн ҫĕнтерӳ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 16-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Верховный Главнокомандующи, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе панă приказ ҫине ответлесе, пирĕн МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем ҫураки вăхăтĕнче тумалли ĕҫсене срокчен пурнăҫлама обязательство илчĕҫ. Пирĕн планпа ҫуракинче пурĕ 3,200 гектар сухаламаллаччĕ, эпир майăн 16-мĕшĕ тĕлне 3.226 гектар сухаласа, плана иртерсе тултартăмăр.

Уйрăмăнах ҫак бригадăсем аван ĕҫленине палăртмалла. П. Можаров ертсе пыракан 4-мĕш трактор бригади ҫураки планне 106 процент тултарчĕ. Бригадăри В. Гавриловпа А. Можарова трактористсем плана 107 процент тултарчĕҫ, 50-шар килограмм горючи перекетлесе хăварчĕҫ. Трактористка Е. Ефимова юлташ та плана 107 процент пурнăҫларĕ.

А. Мокеев ертсе пыракан 10-мĕш бригада ҫуракинчи ĕҫ планне 102 процент тултарчĕ. Ҫак бригадăри Л. Никитин тракторист хăйĕн планне 155 процент пурнăҫласа, 35 килограмм горючи перекетлерĕ.

П. Владимиров юлташ ертсе пыракан тракторсен 12-мĕш бригади ҫуркунехи ĕҫсен планне 101,1 процент тултарчĕ. Ҫак бригадăри В. Егоровпа В. Александрова юлташсем хăйсен ĕҫ планне 151 процент пурнăҫларĕҫ. А. П. Павлов юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригада майăн 15-мĕшĕ тĕлне плана 101 процент тултарчĕ. Трактористсем Н. Степанов плана 144 процент, Е. Анисимова —121 процент, Т. Сергеева 121 процент пурнăҫларĕҫ.

Майăн 15-мĕшĕ тĕлне тракторсен 7 бригади те хăйĕн планне иртерсе тултарчĕ. Паян ытти бригадăсенчен хыпар илнĕ хыҫҫăн пирĕн МТС ҫуркунне тумалли ĕҫсен планне иртерсе тултарни ҫинчен пĕлтĕмĕр.

Районра ака ĕҫĕ пĕтмен-ха, ҫавăнпа та малалла та эпир пикенсех ĕҫлетпĕр. Тунă ҫитĕнӳсем пире тата лайăхрах ĕҫлеме хавхалантараҫҫĕ. Пирĕн трактористсемпе трактористкăсем колхозсене вăйлă тырпул туса илме пулăшас тесе ырми-канми ĕҫлеҫҫĕ.

А. К. КОНСТАНТИНОВ,
Красноармейски МТС директорĕ.

Саженов тракторсене кĕтет, тăпра кашни кунах типет

ЙĔПРЕҪ. (**Телефонпа**). Районра малта пыракан «Большевик», «Тымар», «Красный партизан» колхозсем пĕрчĕллĕ тата пăрҫа йышши тырăсене акса пĕтереҫҫĕ. «Красный водник» колхоз ыран тĕштырăсене акса пĕтерет. Ҫак колхозри Макаров, Андреев, Иванов сухаҫăсем кулленхи нормăна 120 процент ытла тултарса пыраҫҫĕ.

Анчах районра пĕтĕмĕшпе илсен, ҫураки ĕҫĕ ытла та вăрахăн пырать. Уйрăмăнах «Герой», «Красный урожай» Димитров ячĕпе тăракан колхозсем япăх ĕҫлеҫҫĕ. Вĕсем пĕтĕм района каялла туртаҫҫĕ. Димитров ячĕпе тăракан колхозра туртăм вăйĕпе кирлĕ пек усă курмаҫҫĕ. Майăн 13-мĕшĕнче ҫак колхозра 9 лашапа пурĕ те 1,5 гектар кăна сухаланă.

«Герой» колхозăн кăҫал 505 гектар акмалла. 10 кун хушшинче кунта пурĕ те 52 гектар ҫеҫ акнă. Колхозниксем ĕҫе ирхине 10 сехетре тухаҫҫĕ те ирех таврăнаҫҫĕ. Колхоз председателĕ Саженов юлташ васкамасть: — Тракторсем килессе кĕтетпĕр, — тесе ларать. Ҫураки ĕҫĕнче колхозниксене ертсе пымасть. Кунта массăллă-ăнлантарулă ĕҫ те ҫителĕксĕр. Саженов тракторсене кĕтет, анчах тăпра Саженова кĕтмест, кашни кунах типет.

П. КУРАКОВ.

Тырă акса пĕтереҫҫĕ

СОВЕТСКОЕ, майăн 16-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Ҫуллен вăйлă тырпул туса илсе, колхозниксен пурнăҫне лайăхлатса пырасси — Кивуйри «1-ое Мая» колхозăн яланхи йăли пулса тăчĕ. Мирлĕ строительство ҫулĕсенче колхоз тăтăшах Пĕтĕм Союзри Ялхуҫалăх выставкин участникĕ пулнă. Вăрҫă вăхăтĕнче те вăл хăйĕн чыске ҫухатмарĕ, — фронтпа ҫĕршыва ытларах та ытларах апат-ҫимĕҫ парса тăчĕ. ВКП(б) Обкомĕ ҫак колхоз 1943 ҫулта лайăх ĕҫленĕ, тесе палăртрĕ.

Колхозниксем кашни гектартан 100 пăтран кая мар тырă туса илме обязательство илнĕ. Халĕ вĕсем хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăҫласа пыраҫҫĕ.

Колхоз ҫуртыррисем акса пĕтерет ĕнтĕ. Тĕштырăсене 7 кун хушшинче акса пĕтернĕ. Халĕ ҫĕрулми лартассĕ, кантăр акаҫҫĕ. Ҫуракине лайăх туса иртернĕ. Сĕлĕпе тулă вăрлăхĕсене чӳхесе акнă. Сеялкăсемпе анлăн усă курнă. Лашасем ывăнман. Вĕсене пăхас ĕҫе аслă конюх Т. Яковлев (Главвыставкомăн пĕчĕк кĕмĕл медалĕпе награждăланăскер) лайăх йĕркеленĕ. Конюх В. Ильина пăхнă лашасем ĕҫре уйрăмах чăтăмлă пулни палăрнă.

Колхозниксем сдельщина йĕркипе ĕҫлеҫҫĕ. Ҫакă вăл ĕҫ тухăҫлăхне ӳстерме тата ĕҫе лайăх туса пыма май пачĕ. Нумай колхозниксем нормăсене иртерсе тултарса ĕҫлерĕҫ. Сухаҫăсем Ф. Иванов, П. Тимофеев, В. Харитонов куннe 1 гектар сухалас вырăнне 1,25—1,30-шар гектар сухаласа пычĕҫ. Сӳрелекен С. Миронова нормăна 154 процент тултарса ĕҫлерĕ. Акакан П. Кузьмин та нормăран иртерсе акса пычĕ.

Я. СИГАЙ.

„Дружба“ колхозра

Кăҫалхи ҫул кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илессишĕн «Дружба» колхоз «Заря» колхозпа ăмăртса ĕҫлет. Минераллă удобренисен уссине тивĕҫлипе хакласа, колхозниксем хĕллехи вăхăтра Вăрмар станцинчен 250 тонна удобрени ҫунасемпе хăйсем туртса килнĕ. Халĕ кĕрхи калчасене 400 гектар минераллă удобренисемпе апатлантарнă, ҫĕр гектара яхăн калчана сӳрелепĕ, 67 гектар ҫине вака улăм витнĕ. Ку ĕҫсене халĕ те туса пыраҫҫĕ.

Колхозниксем ҫураки ĕҫĕсене вăхăтра та пысăк пахалăхпа туса иртерессишĕн тăрăшса ĕҫлеҫҫĕ. Паянхи куна 200 гектар ҫине яровизациленĕ вăрлăхсем акнă, вăрлăх участокĕсене уйăрса палăртса хунă.

Колхозра уйрăм бригадăсенче ҫураки ĕҫĕсем мĕнле пынине, колхозниксем мĕнле ĕҫленине кашни кунах ятарласа организациленĕ листок ҫине ҫырса пыраҫҫĕ. Колхозра пурĕ 6 бригада. Вăл шутран 1-мĕшпе (бригадирĕ Николаев юлташ) 3-мĕш бригада (бригадирĕ Барсова юлташ) ҫураки пуҫланнăранпах малта пыраҫҫĕ. Вĕсем кашни гектартан 120 пăтран кая мар тырă туса илессишĕн кĕрешеҫҫĕ. Виҫҫĕмĕш бригадăра кĕрхи калчасене пĕтĕм участокĕпех (60 гектар) минераллă удобренисемпе апатлантарса хăварнă, ҫурхи тырăсем акмалли ҫĕр лаптăкĕнчен 26 гектар ҫине ытла минераллă удобренисем тăкнă, пĕррĕмĕш бригадăра 69 гектар ҫинчи кĕрхи калчасене апат панă, ҫурхи тырăсем акмалли 29 гектар ҫине минераллă удобренисем тăкнă. Ҫурхи тырăсен калчисем шăтса тухсан апат пама 150 центнер сульфат-аммони, кали тăварĕ тата суперфосфат хатĕрлесе хунă.

Ĕҫе тĕрĕс организациленĕ пирки ҫуракинче ĕҫлекен колхозниксем нумайĕшĕ ĕҫ нормисене ытлашшипех тултарса пыраҫҫĕ. Нормăпа пĕр гектар сухаламалла пулсан, 1-мĕш бригадăри сухаҫăсем — Анна Спиридонова 1,30 гектар, Лидия Иванова—1,35 гектар, Л. Желтухина — 1,25 гектар сухалаҫҫĕ. 3-мĕш бригадăри М. Андриановăпа М. Григорьева—1,4-шар гектар сухалаҫҫĕ. 5-мĕш бригадăри колхозник, эвакуаци йĕркипе килнĕ Иван Михайлов кунне 1,6—1,7-шер гектар сухалать. Ĕҫе унăн паха пулса пырать. Сӳрсĕ Алексей Павловăн виҫĕ лашапа норма тăрăх 2 гектар сӳрелемелле пулсан, вăл 3—3,5 гектар сӳрелет. Лашасене лайăх кантарса ĕҫлеттерес тесе вĕсене каннă вăхăтра апат уя илсе тухса ҫитереҫҫĕ. Ĕҫ пахалăхне яланах бригадирсем тата колхоз активĕнчен уйăрнă колхозниксем тĕрĕслесе тăраҫҫĕ.

Вăйлă тырпул туса илесси пусуҫаврăнăшĕ тăрăх анасем ҫине курăк вăрлăхĕсем акса хăварнинчен те нумай килет. Курăк акни тăпра тытăмлăхне лайăхлатса, ӳсен-тărана вăйлăн ӳсме пулăшать тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме ҫителĕклĕ апат-ҫимĕҫ кӳрет. Ҫавна шута илсе, кăҫал колхозра пурĕ 100 гектар ытла клеверпа тимофеевкăна пĕрле хутăштарса акса хăварнă.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕҫлекенсем хăйсен вăйĕпе кăҫал ферма ҫумĕнчи участоксенче выльăхсем валли 20 гектар апат-ҫимĕҫ культурисем акса хăварма йышăннă. Ҫак ĕҫе вĕсем пурнăҫлама тытăннă та ĕнтĕ. Фермăра ĕҫлекенсем кашни сăвакан ĕне пуҫне 40-шер центнер, кашни сурăхпа сысна валли 4-шар центнер силос хатĕрлеҫҫĕ тата 150 центнер витаминлă апат хатĕрлеме йышăннă.

Колхозра агитколлектив руководителĕ коммунист А. Мясникова юлташ колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕҫе аван йĕркелесе пырать. Агитколлективра 42 ҫын тăрать, вăл шутра 7 коммунист, 9 комсомолец.

Кашни бригадăрах боевой листоксем туха тăраҫҫĕ, кунсăр пуҫне колхозра кăҫалхи ҫул «Мы победим» ятлă стена хаҫачĕ 5 номер тухнă, халĕ ҫураки вăхăтĕнче «Молния» стена хаҫачĕ туха тăрать. Хаҫатсем колхозниксене вăйлă тырпул туса илме, ҫуракине кĕске вăхăтра та пысăк пахалăхпа туса иртерме хавхалантараҫҫĕ. «Молния» стена хаҫачĕн юлашки номерĕнче ĕҫ пахалăхне ӳстересси, тăпрари нӳрлĕхе сыхласси ҫинчен ҫырнă, аван ĕҫлекен П. Михайлов опытне кăтартса панă, ҫав вăхăтрах сухаҫă Зоя Павлова шăйрăклă сухаланине критикленĕ. Ҫав ҫитменлĕхсем ҫине колхоз правленийĕ, унăн председателĕ Григорьев юлташ вăхăтра ҫавăрăнса пăхаҫҫĕ. З. Павловăна плугне юсаса панă, мĕнчул тарăн сухаламаллине йĕркеленĕ.

Тата колхозра Павлов агитатор «Юлашки хыпарсем» хăми ҫине кашни кунах Совинформбюро сводкисене ҫырса колхозниксене пĕлтерет. Ҫапла ĕҫлеҫҫĕ «Дружба» колхозра.

Н. КОНДАКОВ.
Вăрмар районĕ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАЙӐН 15-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Майӑн 15-мӗшӗнче фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Майӑн 14-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ки мӗҫсен 19 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 33 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ РАВА-РУССКАЯ, СТРЫЙ, ДВИНСК ЧУГУН ҪУЛ УЗЕЛӖСЕМ ҪИНЕ БОМБАСЕМ ПӐРАХНИ

Майӑн 15-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн инҫене вӗҫекен авиаци тӑшманӑн **Рава-Русская (Львов** хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре), **Стрый (Львов** хулинчен кӑнтӑртарахра) тата **Двинск** чугун ҫул узелӗсенче пухӑнса тӑнӑ ҫар эшелонӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Бомбӑсем пӑрахнине пула **Рава-Русская** чугун ҫул узелӗнче 8 пушар тухнӑ, вӗсенчен пӗри пит вӑйлӑ пушар пулнӑ. Узелӑн вӑтаҫӗрти пайӗнче икӗ чугун ҫул эшелонӗ ҫуннӑ. Пушарта темиҫе вӑйлӑ взрыв пулнӑ. Пирӗн самолетсем тупӑсемпе тата пулеметсемпе тӑшманӑн **Рава-Русская** патнелле пыракан тата хушӑри станцисенчи эшелонӗсене пенӗ. **Ухнов** станцийӗнче виҫӗ пушар тухнӑ, пушарсенче взрывсем пулнӑ; ҫав станцирен хӗвел-тухӑҫнерехре чугун ҫул эшелонне вут тивертсе янӑ; **Добросин** станцийӗнче бомба тӳрех пырса тивнипе пӗр эшелон сирпӗнсе кайнӑ; **Рава-Русская** сывӑхӗнчи ытти станцисенче темиҫе поезд ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ е ҫунса кайнӑ. **Стрый** чугун ҫул узелӗ ҫине те ҫавӑн пекех бомбӑсем нумай пӑр[illegible].

Двинск чугун ҫул узелӗнче бомбӑсем пӑрахнине пула пушарсем нумай тухнӑ. Вагонсем, платформӑсем тата тӑшманӑн ҫар склачӗсем ҫуннӑ. Пушарсенче взрывсем пулнӑ.

Пирӗн пӗр самолет хӑйӗн аэродромне таврӑнман.

☆ ☆ ☆

ФЛОТ АВИАЦИЙӖ ТӐШМАНӐН КИРКИНЕС ПОРЧӖН РАЙОНӖНЧИ СУДНИСЕНЕ ПЫРСА ҪАПНИ

Майӑн 14-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн сывлӑшри разведка Норвегин ҫурҫӗр пайӗнче Киркинес порчӗн районӗнче тӑшман конвойне курнӑ. Конвойра 16 транспорт тата вӗсене сыхласа пыракан 23 карап пулнӑ. Пирӗн авиаци тӑшманӑн ҫар судниcем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Сапла пырса ҫапнине пула, нимӗҫсен пӗтӗмӗшпе 19.000 тонна таякан 3 транспорчӗ, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен пӗр баржи, пулӑшу паракан судни тата хурал катерӗ шыва путнӑ. Тӑшманӑн 3 транспортне вут хыпса илнӗ, вӗсенчен пӗри ҫыран хӗррине тухса ӳкнӗ. Унсӑр пуҫне, ытти икӗ транспортне тата хуралласа пыракан карапӗсене сиенленӗ.

* * *

Станислав хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре нимӗҫсен сӑрт стрелокӗсен батальонӗ пирӗн позицисене атакӑланӑ. Малтанах гитлеровецсем, пирӗн малти охраненин хӗссе, пӗр пӗчӗк ҫӳллӗ вырӑна йышӑннӑ. Пӗр чаҫри боецсем хирӗҫ пырса ҫапса нимӗҫсене ҫав ҫӳллӗ вырӑнтан хӗссе кӑларнӑ та хӑйсен малтанхи позицийӗсене пӗтӗмӗшпех каялла туртса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 100 виллине яхӑн выртса юлнӑ тата тӑшман пӑрахнӑ хӗҫпӑшал чылай выртса юлнӑ. Ирхине ирех нимӗҫ самолечӗсем пирӗн оборонӑн малти хӗрри ҫине бомбӑсем пӑрахма хӑтланнӑ. Безруков майорӑн тата гварди подполковникӗн Беляевӑн зенитчикӗсем тӑшманӑн 10 самолетне персе ӳкернӗ. Нимӗҫсен ытти бомбардировщикӗсене сапаласа янӑ, бомбӑсем пӑрахма шутлапӑ вырӑна тухма паман. Кӑшт вӑхӑт иртсен, ҫав района «Юнкерс» йышши самолетсен ушкӑнӗ тепӗр хут пырса тухнӑ. Совет зенитчикӗсем ҫак сывлӑшри атакӑна та ӑнӑҫлӑ сирсе янӑ, тӑшманӑн 3 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Тирасполь хулинчен ҫурҫӗр-хевеланаҫнерехре пирӗн чаҫсем, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатас тесе, Днестр шывӗн сулахай енчи плацдарма йышӑнса тӑракан тӑшманӑн позицийӗсене атакӑланӑ. Ҫак ҫапӑҫура гитлеровецсене Днестр шывӗ урлӑ хӑваласа янӑ. Тӑшман пехотине пӗр батальонран кая мар пӗтерсе тӑкнӑ. Нумайӗшӗ шывра путса вилнӗ. Пирӗннисем трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна пленнисем пур.

* * *

Калинин облаҫӗн хӗвеланӑҫ районӗсенче кӗрешекен партизансем [illegible] кайнӑ. Апрелӗн 24-мӗшӗнчен пуҫласа майӑн 1-мӗшне ҫитиччен Калинин облаҫӗнче кӗрешекен партизансем тӑшманӑн 14 чугун ҫул эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ. Ҫав крушенисенче 9 паровоз, 90 вагон ҫӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Венгри салтакӗсем Хӗрлӗ Ҫар енне час-часах куҫма пуҫлани Гитлерӑн Будапештри тарҫисене хӑратса пӑрахнӑ. Юлашки вӑхӑтра Совет Союзӗпе Германи фронтӗнче Венгри салтакӗсен подразделенийӗсенче пуринче те жандармсен ушкӑнӗсем тунӑ. Венгерсен 24-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 24-мӗш полкӑн 7-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ салтак Василий Круп ҫапла каласа панӑ: «Халӗ кашни ротӑрах 5-шер жандарм; вӗсем салтаксене асӑрхасах тӑраҫҫӗ. Атакӑсем тунӑ чухне вӗсем салтаксен речӗсем хыҫӗнче тӑраҫҫӗ. Венгри салтакӗсем каялла чакма тытӑнсан е Хӗрлӗ Ҫар енне куҫма хӑтлансан, жандармсем вӗсене пеме пуҫлаҫҫӗ».

Венгерсен сӑрт стрелокӗсен 1-мӗш бригадинчи 3-мӗш батальонӑн 3-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ жандарм Дердь ҫапла каласа панӑ: «Март уйӑхӗнче мана Рахо хулинчи хирти жандармсен курсне ячӗҫ. Ҫак курса сӑрт стрелокӗсен 1-мӗш бригадинчи кашни ротӑран 5-шер салтак е ефрейтор пухӑнчӗҫ. Ҫак курса пӗтернӗ хыҫҫӑн пире фронта ячӗҫ. Хирти жандармери командирӗ батальон штабӗ ҫумӗнче тӑрать. Пире салтаксене судсӑр-мӗнсӗрех, следстви тумасӑрах персе пӑрахма ирӗк панӑ».

[illegible]

Метрон „Электрозаводская" ятлӑ ҫӗнӗ станцийӗ ӗҫлеме пуҫланӑ

Мускаври Каганович ячӗпе тӑракан метрополитенӑн Покровка радиусӗнче электростанци туса пӗтернӗ. Ӑна Гейфлерпа Рожин архитекторсен проекчӗ тӑрӑх тунӑ. [illegible] тылӗ ячӗпе йӗркеленӗ, совет тылӗ фашистла нимӗҫ захватчикӗсене аркатма хӑйне-хӑй хӗрхенмесӗр ӗҫлесе Хӗрлӗ Ҫара пулӑшнӑ ятпа йӗркеленӗ. Мотовилов скульптор тунӑ 14 барельеф самолетсем, танксем тӑвакансен, металлургсен, нефтяниксен тата промышленноҫӑн ытти отраслӗсенчи стахановецсен ӗҫне кӑтартса парать. Уйрӑм барельефсем электрозавод ӗҫне кӑтартаҫҫӗ.

Ҫӗнӗ станцире ҫап-ҫутӑ, темиҫе тӗслӗ мрамор ҫутӑлса тӑрать. Свод пӗккинче электричество тӗлӗшпе чаплӑ ӗҫсем туса [illegible] мухтава тухнӑ тата ученӑйсен скульптурӑн портретсене туса лартнӑ. Вӗсем ҫинче: Ломоносов, Джильберт, Попов, Франклин, Фарадей, Яблочков. Станци [illegible] текен хӗрлӗ мрамор калама ҫук лайӑх илемлетсе тӑраҫҫӗ. Варринчи залӑн сӑнсӑпатне ылттӑн тӗсне кӗртнӗ бронзӑран тунӑ решеткесем тата хура гранитран тунӑ урай хитрелетсе тӑраҫҫӗ.

Станцие тунӑ чухне геологи тӗлӗшӗнчен питӗ йывӑр условисенче ӗҫленӗ. Ишӗлсе пыракан ҫӗр сийӗсенче ӗҫлемелле пулнӑ.

Майӑн 15-мӗшӗнче, станцие хута янӑ май, савӑнӑҫлӑ митинг пулса иртнӗ. (ТАСС)

Ирӗке кӑларнӑ хуласене юсаса ура ҫине тӑратмалли проектсем

Столицӑри чи чаплӑ архитекторсем халь ирӗке кӑларнӑ хуласене юсаса ура ҫине тӑратмалли проектсем хатӗрлеҫҫӗ. Академик К. Алабян ертсе пыракан бригада Сталинград хулин вӑтаҫӗрти пайӗн генеральнӑй проектне хатӗрлет. Академик Б. Иофан Новороссийск хулин проектне хатӗрлет, академик В. Семенов Дон ҫинчи Ростов хулин хатӗрленӗ генеральнӑй планне тӳрлетет, академик Н. Колли Калинин хулин планне тӳрлетет, академик С. Чернышов пулас Курскӑн проектне хатӗрлет, академик Л. Руднев Воронеж хулин проектне хатӗрлесе ҫитерет. Пӗтӗм Союзри Архитектура Академийӗн член-корреспонденчӗ Г. Гельфрейх Ржев хулине юсаса ура ҫине тӑратмалли проект хатӗрлет. Академик Г. Гольц ертсе пыракан бригада Смоленск хулине туммалли плана хатӗрлесе ҫитернӗ, ӑна ӗнтӗ РСФСР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Архитектура Управленийӗ ырланӑ.

Ҫитес кунсенче Мускавра автономлӑ республикӑсен, крайсен тата облаҫсен архитектура Управленийӗсемпе отделӗсен руководителӗсен Пӗтӗм Российӑри канашлӑвӗ пуҫӑлать. Ҫав канашлура ирӗке кӑларнӑ хуласене юсаса ура ҫине тӑратмалли проектсен авторӗсем хӑйсен ӗҫӗсем ҫинчен каласа параҫҫӗ. (ТАСС).

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче

Ӳкерчӗк ҫинче: Крымра тыткӑна лекнӗ нимӗҫсем. М. АЛЬПЕРТПА Е. ХАЛДЕЙ фотокорреспондентсем (ТАСС фотохроники).

Херсонесра, Севастопольте

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, майӑн 15-мӗшӗ. **(ТАСС спецкорӗ).** Херсонес сӑмсахӗ районӗнче тупӑсем юлашки хут харӑс персе янӑ вӑхӑтра бухтӑра тӑшманӑн шыва путман карапӗсем ҫуна-ҫуна пӗтнӗ. Нимӗҫсем ҫав карапсем ҫине ларса тарма хатӗрленнӗ пулнӑ.

Акӑ, Херсонес сӑмсахӗ. Унта маяксем тӗрлӗ тӗслӗ ҫутӑпа ҫутатса тӑраҫҫӗ. Совет боецӗсем, мӗнпур чӑрмавсене ҫӗмӗрсе, ҫав сӑмсах патнелле вӑркӑннӑ. Херсонес сывӑхӗнчи кашни метр ҫӗр ҫине нимӗҫсен темиҫе ҫӗр тупӑ персе тӑнӑ. Нимӗҫсем, вилме лекнӗ ҫынсем пек, ҫав тери хаяррӑн хирӗҫ тӑнӑ. Гитлер радиограмма хыҫҫӑн радиограмма янӑ, юлашки ҫын юлмиччен тытӑнса тӑма хушнӑ, пурне те вӑхӑтра илсе тухма пулнӑ. Анчах халь сӑмсах та, бухта тӗпӗ те тӑшман виллисемпе витӗннӗ.

Темиҫе ҫӗр тупӑ, темиҫе пин пулемет, окопсемпе инженерла сооруженисем туса тултарнӑ ҫӳллӗ чул сӑртсем, — ҫаксем совет ҫарӗсене чарма пултарайман.

Сӑмсах ҫинчи чи ҫӳллӗ вырӑнсенчен тӑшмана хӑваласа кӑларса, крепоҫсене тытса илнӗ хыҫҫӑн боецсемпе офицерсем фашистла нимӗҫ ҫарӗсен юлашкийӗсене аркатма тытӑннӑ. Херсонес аэродромӗшӗн кӗске вӑхӑт хушши хаяр ҫапӑҫу пулса иртнӗ. Унта нимӗҫсен темиҫе вунӑ самолечӗ пулнӑ. Вӗсем сывлӑша вӗҫсе хӑпарма хатӗр тӑнӑ, моторӗсем кӗрленӗ, анчах та пирӗн наступлени тӑвакан чаҫсем вӗсене сывлӑша хӑпарма паман. Херсонес сӑмсахӗ районӗнче тинӗс ҫумне хӗстерсе лартнӑ нимӗҫсене пирӗн артиллерипе авиаци тата пехотинецсем кӑнтӑр тӗлне пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ.

Эпир тин ҫеҫ ҫапӑҫу пулса иртнӗ вырӑнсемпе пыратпӑр. Кунта кашни чул калама ҫук хаклӑ. Ҫӗре чавса тунӑ пӗр пысӑк мар пӳрт патӗнче темиҫе боец ҫӗр ҫумне выртнӑ та чулсене чуптӑваҫҫӗ: кунта 1942 ҫулхи июнӗн 30-мӗшӗнче вӗсен юлташӗсем вилнӗ.

Куҫ курма пултаракан пӗтӗм лаптӑк автомашинӑсен, тупӑсен, минометсен, самолетсен, лавсен ванчӑкӗсемпе тата нимӗҫсемпе румынсен виллисемпе тулса ларнӑ. Вӗсем нумай, ытла та нумай.

Тыткӑна лекнӗ ҫынсем вӗҫӗ-хӗррисӗр утса пыраҫҫӗ. Унта темиҫе пин те пур. Ҫав пусмӑрҫӑсем нумаях пулмасть «Крым яланах нимӗҫсен аллинче пулать!» тесе кашкӑратчӗҫ. Халь вӗсене пирӗн автоматчиксем хуралласа пыраҫҫӗ. Вӗсен сухалӗсем ӳссе кайнӑ, мундирӗсем ҫурӑлса пӗтнӗ, пуҫӗсене усса пыраҫҫӗ. Вӗсем ик еннелле кашкӑрсем пек пӑхса пыраҫҫӗ.

Херсонесра ҫапӑҫусем пынӑ вӑхӑтрах Севастопольте ҫӗнӗрен пурнӑҫ пуҫланнӑ. Урамсемпе, тинӗс ҫумӗнчи бульварсемпе, ишӗлчӗксен хушшипе хулана ирӗке кӑларнӑ моряксем, пехотинецсем, артиллеристсем, танкистсем пынӑ.

Акӑ, панорамӑн ишнӗ ҫурчӗн стенисем. Севастопольте пурӑнакан ҫынсем йывӑр кунсенче те унта ҫӳреме чарӑнман. Стенасем ҫинче кӑмрӑкпа ҫырнӑ сӑмахсем сыхланса юлнӑ: «Сывӑ пултӑр ВКП(б)! Гитлер тӗп пултӑр!», «Вырӑс халӑхне мӑшкӑлланӑшӑн гитлерла бандитсене вилӗм!»—тесе ҫырнӑ вӗсем ҫинче. Вырӑс хӗрӗсем Зина, Аня, Валя, Лида тата Нина ҫапла ҫырса хӑварнӑ: «Нимӗҫсене вилӗм!»

Севастополь патриочӗсем нимӗҫсене пур майсемпе те хирӗҫ тӑнӑ. Вӗсем шӑтӑксенче, чул кӑларакан вырӑнсенче пытанса пурӑннӑ, нимӗҫсен приказӗсене итлемен. Севастополь ҫыннисене темиҫе пин ҫынна нимӗҫсем персе е тинӗсе путарса вӗлернӗ, Германи чуралӑхне хӑваласа кайнӑ. Фашистла чуралӑхран ҫӑлӑнса юлас тесе, ҫынсем тусенчи шӑтӑксене кӗрсе ларса пытӑрӗнсе пурӑннӑ.

Севастополь ҫӗнӗрен пурӑнма тытӑнать. Вӑйлӑ репродукторсем юлашки хыпарсене пӗлтереҫҫӗ. Савӑнӑҫлӑ хыпарсем. Телефон ӗҫлет. Нимӗҫсем автоматлӑ телефон станцийӗ айне минӑсем хурса хӑварнӑ пулнӑ, анчах совет патриочӗсем ҫав минӑсем патне пыракан пралуксене касса татма ӗлкӗрнӗ, станци вара сыхланса юлнӑ. Шыв таптаракан башньӑна юсаса ҫӗнӗрен ӗҫлеттерме пуҫланӑ, халь вӑл хулана шыв парса тӑрать. Ҫӑкӑр пӗҫерме пуҫланӑ, парикмахерскисем, поликлиникӑсем уҫӑлнӑ, урамсемпе площадьсене тасатаҫҫӗ.

ВКП(б) горкомӗн секретарӗп Лесик юлташӑн кабинетне учительсем пухӑннӑ, вӗсем шкулсене уҫасси ҫинчен сӳтсе яваҫҫӗ. Инженер Шагинян юлташ строительсене пухнӑ та вӗсемпе пӗрле ҫуртсене юсама хатӗрленет. Ҫак кунсенче хулана электричество энергийӗ панӑ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсем пулӑшнипе хула ҫумӗнчи совхозра каярах ҫитӗнекен культурӑсене акма тытӑннӑ.

М. ТУРОВСКИЙ.

Государствӑна ҫӗнӗ тырӑ пама пуҫланӑ

● Узбекистанра государствӑна ҫӗнӗ тырӑ пама пуҫланӑ. Камка-Дарьински облаҫри Кассан районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхоз чи малтан панӑ. Вӑл государствӑн тырӑ илекен пунктне пин пӑт ытла урпа турттарса пынӑ. Чиракчински районри колхозсем те государствӑна тырӑ памалли плана пурнӑҫа кӗртме пуҫланӑ.

● Туркменири Геок-Тепински районри колхозсем государствӑна ҫӗнӗ тырӑ пама пуҫланӑ. Ыран-паян Бахарденски тата Ашхабад районӗсенчи колхозсем те государствӑна ҫӗнӗ тырӑ пама пуҫлаҫҫӗ. (ТАСС).

Коллективла тата уйрӑм пахчасенче пысӑк тухӑҫлӑ пахча-ҫимӗҫ туса илнӗшӗн премисем

ВЦСПС секретариачӗ 1944 ҫулта рабочисемпе служащисен коллективлӑ тата уйрӑм пахчисенче пысӑк тухӑҫлӑ пахча-ҫимӗҫ туса илнӗшӗн премисем памалла тунӑ.

Профсоюзсен Центральный Комитечӗсем валли—куҫса ҫӳрекен 2 Хӗрлӗ Ялав тата ВЦСПС-ӑн 10 грамотине тунӑ, фабрикӑсемпе заводсенчи комитетсем, вырӑнти комитетсем тата вӗсен пахча комиссийӗсем валли—куҫса ҫӳрекен 3 Хӗрлӗ Ялав, ВЦСПС-ӑн 500 грамотине тата укҫан памалли 50 премине тунӑ, вӗсен шутӗнче — 20 преми 10-шар пин тенкӗлӗххисем, 30 преми 5-шер пин тенкӗлӗххисем.

Фабрикӑсемпе заводсенчи тата вырӑнти комитетсемпе вӗсен пахча комиссийӗсем пахчари кашни тӑваткӑл метр ҫӗр ҫинчен 3 килограмм ҫӗрулми, 5 килограмм купӑста, 4 килограмм чӗкӗнтӗр е кишӗр, 2 килограмм сухан тӗпӗ пухса илсессӗн, вӗсем ҫак грамотӑсемпе премисене илме пултараҫҫӗ. Профсоюзсен Центральный Комитечӗсем пахчасенче ӗҫлеме рабочисемпе служащисене ытларах явӑҫтарсан тата чи пысӑк тухӑҫлӑ ҫӗрулми, купӑста, чӗкӗнтӗр, кишӗр, пӑрҫа йышши е ытти культурӑсем пухса илме мобилизацилесен, ВЦСПС-ӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗпе грамотисене илме пултараҫҫӗ.

Куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавсемпе ВЦСПС-ӑн грамотисене тата укҫан памалли премисене ВЦСПС ҫумӗнче рабочисемпе служащисен пахча ӗҫне пулӑшма тунӑ комисси 1944 ҫулхи декабрӗн 1-мӗшӗпе 15-мӗшӗ хушшинче парать. Илнӗ премин 50 процентӗпе инвентарьсем, удобренисем тата ытти япаласем туянӑ ҫӗрте усӑ курмалла, 50 процентӗпе профсоюз организацийӗсемпе пахча комиссийӗсене премиленӗ ҫӗрте усӑ курмалла. (ТАСС),

17 кӗсре чуптарна

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Колхозра лашасен йышне ӳстерес ӗҫре чуптару кампанийӗ пысӑк вырӑн йышӑнать. Ҫавна шута илсе, эпир «Красное Сормово» колхозра чуптару кампанине лайӑх ирттерме тӑрӑшатпӑр. Паянхи кун тӗлне пурӗ 17 кӗсре чуптарса хӑварнӑ. Ку ӗҫе малашне те тимлӗн туса пыратпӑр.

Конюх **М. СТЕПАНОВ.**

Ют ҫӗршывсенче

Хӗҫпӑшала кивҫен е арендӑна парасси ҫинчен калакан законӑн срокне малалла тӑсни

ВАШИНГТОН, майӑн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Пӗрлешӳллӗ штатсенчи представительсен палати хӗҫпӑшала кивҫен е арендӑна парасси ҫинчен калакан законопроектӑн сенат йышӑннӑ вариантне ырланӑ. Ҫав вариант хӗҫпӑшал кивҫен е арендӑна парасси ҫинчен калакан законӑн срокне 1945 ҫулхи июнӗн 30-мӗшӗччен тӑсма сӗнет. США сеначӗ ҫак законӑн срокне тӑсма йышӑннипе пӗрлех майӑн 8-мӗшӗнче закона тӳрлетекен пункт йышӑннӑ. Ҫав пунктра ҫапла калать: «Президент вӑрҫӑ хыҫҫӑн пулмалли экономика, ҫар тата ытти политика тӗлӗшпе те ытти ҫӗршывсемпе конституцире кӑтартса паннисӗр пуҫне, США ячӗпе нимӗнле килӗшӳсем те тума пултараймасть», — тенӗ. Халӗ хӗҫпӑшала кивҫен е арендӑна парасси ҫинчен калакан законӑн срокне малалла тӑсасси ҫинчен представительсен палатипе сенат ырланӑ проекта Рузвельт пайне алӑ пусма янӑ.

АНГЛИ АВИАЦИЙӖ КЕЛЬНА ТАПӐННИ

ЛОНДОН, майӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви ҫапла пӗлтерет: майӑн 15-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Кельна тапӑннӑ, ҫавӑн пекех тата Францири, Бельгири тата Голландири объектсене те тапӑннӑ

РУМЫНИ ХАЛӐХӖ ХӐРАСА ӲКСЕ ХУЛАСЕНЧЕН ТУХСА ТАРАТЬ

СТАМБУЛ, майӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Румынирен ҫитнӗ хыпарсем тӑрӑх, Румынири «хӑрушӑ районсенчен» ирӗксӗрлесе кӑларса кайнӑ халӑх усӑ ҫӗртех пурӑнать, вӗсене пурӑнма пӳрт-ҫуртсем тупса параймаҫҫӗ, апат-ҫимӗҫ те парса тӑмаҫҫӗ.

Румыни влаҫӗсем хулари халӑха хуласенчен тухса тарма тем пекех чараҫҫӗ, анчах та ӗҫ пухмасть. Бухарест хулин ҫар комендантӗ апрель уйӑхӗ пӗтнӗ чухнех ытарласа приказ кӑларнӑччӗ. Ҫав приказ тӑрӑх, хулари чиновниксене, промышленность предприятийӗсемпе суту-илӳ предприятийӗсенчи рабочисемпе служащисене, железнодорожниксемпе трамвай работникӗсене медицина работникӗсене т. ыт. те хуларан тухса кайма хытарсах чарса лартнӑччӗ. Анчах ҫапах та, «Тимпул» хаҫатра ҫырнӑ тӑрӑх, Бухарест хулинчен чиновниксем, тухтӑрсем, аптекарьсем нумайӗшӗ тухса тарнӑ. Аптекарьсем хӑйсемпе пӗрле медикаментсене те илсе кайнӑ, аптекисене хупса хӑварнӑ. «Мониторул официал» ятлӑ хаҫат влаҫсем панӑ распоряжение пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав распоряжени тӑрӑх, служащисен пурин те Бухарестра таврӑнса ӗҫлеме пуҫламалла. «Ҫакӑнта каланине итлемен служащисене питӗ хытӑ айӑплаҫҫӗ», тенӗ ҫав распоряженире.

ФИНЛЯНДИ ХАЛӐХӖ ТАРАТЬ

СТОКГОЛЬМ, майӑн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Шведсен «Моргонтиднинген» ятлӑ хаҫачӗ ҫапла пӗлтерет: Финляндирен Швецие тарса пынӑ ҫынсен шучӗ пӗрмаях ӳссе пырать. Ҫапла Умео хулине 69 ҫын тарса пынӑ. Тарса пынӑ финн хресченӗсем ҫапла калаҫҫӗ: пирӗн ялсенче нимӗҫ ҫарӗсем тӑраҫҫӗ, ҫавӑн пирки пирӗн хамӑр тӑван ҫӗршыва пӑрахса тармалла пулчӗ, теҫҫӗ

ФИНСЕН ҪАРНЕ ЧИРЛӖ ҪЫНСЕНЕ ИЛЕҪҪӖ

СТОКГОЛЬМ, майӑн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Кунта ҫитнӗ хыпарсем тӑрӑх, финсен влаҫӗсем хӑйсен ҫарне ку таранччен ҫар службинчен пӗтӗмӗшпех хӑтарнӑ чирлӗ ҫынсене те илме пуҫланӑ. Финсен «Суомен сосиали-демокраатти» ятлӑ хаҫачӗ ҫапла ҫырса пӗлтернӗ: майӑн 12-мӗшӗнче парламент делегацийӗ «финсен ҫар министрӗ Вальден патне кайса ҫакӑн ҫинчен хытӑ шухӑшланине пӗлтернӗ: юлашки вӑхӑтра финсен ҫарне чирлӗ ҫынсене—туберкулезпа, чӗре чирӗсемпе тата ытти чирсемпе те асапланакан ҫынсене илме пуҫларӗҫ», — тенӗ.

ГЕРМАНИРИ ЮТ ҪӖРШЫВ РАБОЧИЙӖСЕМ ГИТЛЕРА ХИРӖҪ ОРГАНИЗАЦИ ТУНӐ

СТОКГОЛЬМ, майӑн 12-мӗшӗ. (ТАСС). «Нюа даглигт аллехандa» хаҫат ҫапла пӗлтерет: Брауншвейгра (Германи) ют ҫӗршыв рабочийӗсен Гитлера хирӗҫ вӑрттӑн ӗҫлекен организацине тупнӑ. Француз рабочине Пьер Мерсьене тата ытти ют ҫӗршыв рабочийӗсене арестленӗ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ГЕРМАНИЕ ВАЙПА ХӐВАЛАСА ПУХНӐ ЮТ ҪӖРШЫВ РАБОЧИЙӖСЕНЧЕН ХӐРАҪҪӖ

ГЕТЕБОРГ, майӑн 12-мӗшӗ. (ТАСС). «Гетеборгс постен» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Германире ют ҫӗршыв рабочийӗсене сӑнаса тӑмашкӑн гестапо хӑйне уйрӑм отрядсем организациленӗ. Анчах та ҫапла туни кирлӗ чухне усӑ паман. Ют ҫӗршыв рабочийӗсем ҫаплах сабтаж тӑваҫҫӗ. Германин официальнӑ пӗлтернӗ даннӑйӗсем тӑрӑх та Германире предприятисенчен тарнӑ 60.000 ют ҫӗршыв рабочийӗ вырӑнтан-вырӑна куҫса ҫӳрет. Вӑрттӑн ӗҫлекен организацисем ҫав ҫынсене документсем тата апат-ҫимӗҫ карточкисем парса тӑраҫҫӗ.

Мастерсем нимӗҫ чӗлхипе каласа хушнине эпир ӑнланаймастпӑр, тесе, ют ҫӗршыв рабочийӗсем продукцие юри пӑсаҫҫӗ. Хаҫат ҫапла калать: Германие ирӗксӗр ӗҫлеттерме ют ҫӗршыв рабочийӗсене калама ҫук нумай хӑваласа тухса, гитлеровецсем Германире хӑйсемех «тӗнчере чи пысӑк пиллӗкмӗш колонна туса хучӗҫ», тет.

ГЕРМАНИРЕ «УСАЛ ХЫПАРСЕМ» САРНӐШӐН ПЕРСЕ ПӐРАХНИ

СТОКГОЛЬМ, майӑн 12-мӗшӗ. (ТАСС). «Гамбургер фремденблат» ятлӑ фашистла нимӗҫ хаҫачӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Кенигсберг хулинчи чрезвычайнӑй суд 55 ҫулхи нимӗҫе Рихард Гофмана персе вӗлермелле тунӑ. Ӑна вӑл ют ҫӗршыв радиостанцине вӑрттӑн итлет, «усал хыпарсем» сарать, тесе айӑпланӑ. Хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Гофмана персе пӑрахнӑ.

КӖСКЕН

▲ Рузвельт конгреса послани янӑ. Ҫав посланире вӑл хӗҫпӑшала кивҫен е арендӑна памалли закон тӑрӑх хӗҫпӑшал тӑратмалли программӑна тултарма 1945 ҫулхи июнӗн 30-мӗшӗччен тата 3 миллиард ҫурӑ доллар укҫа пама ыйтать.

▲ Иртнӗ эрне хушшинче Англи авиацийӗн Европа ҫийӗнче 132 самолет пӗтнӗ, Германин 52 самолет пӗтнӗ.

▲ Муссолини фашистсен ҫарне ҫӗнӗрен тӑватӑ вӑхӑтра салтака илмелли ҫынсене мобилизацилесси ҫинчен пӗлтернӗ. Приказра ҫапла хӑратса ҫырнӑ: призыв пунктне пыманнисене пурне те асаплантарса вӗлермелле, тенӗ. (ТАСС).

Ответлӑ редакторӑн заместителӗ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

Госстрахӑн Чӑваш республикинчи управленийӗ ҫакӑн ҫинчен пӗлтерет: колхозсен акнӑ тыррисене, сад пахчисемпе ҫырла пахчисен ҫимӗҫӗсене пӑр ҫапса каясран, ытла вӑйлӑ ҫумӑр ҫӑвасран, тӑвӑлсенчен, ӳсе ларнӑ ҫӗртех ҫунса каясран, ытлашши шӗвесрен, шыв юхтарса каясран, тӑм илесрен тата ейӳ илесрен страхланӑ, кок-сагыз, махорка, табак, тмин тата хӑмла калчисене кунсӑр пуҫне тата типӗ уяртан та страхланӑ.

Кӗрхи тырӑсем тата нумай ҫул хушши ӳсекен акнӑ курӑксем юр айӗнчен тухса ӳсме тытӑнсан колхозсен вӗсене пӑхса тухмалла та сиен пулнине пӗлсен 5 кун хушшинче Госстрах инспекцине заявка памалла. Ҫав заявкӑра сиен курнӑ культурӑсен акнӑ лаптӑкне, миҫе процент сиен курнине тата мӗн пысӑкӗш лаптӑка тепӗр хут пӑсса акма кирлине кӑтартмалла.

Асӑрхаттарни: заявкӑна кая юлса парсан, сиене сапламасӑр ирттерме пултараҫҫӗ (обязательнӑй страховани ҫинчен калакан законӑн 42-мӗш статьи тӑрӑх). 2—1.

Аш-какай комбиначӗн Шупашкарти выльӑх пусакан пунктне производствӑна шута илме пӗлекен старши бухгалтер кирлӗ. Ҫак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, Кировский поселок, ул. Тельмана, 6.

Чӑвашсельэлектро конторине главнӑй бухгалтер, материалсем тӗлӗшпе ӗҫлекен бухгалтер, секретарь-машинистка, инженер-электрик тата гидротехник кирлӗ. Ҫак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 7. 2—1.

Чӑваш АССР-ӗн Наркомхозне машинистка, управделами, инженер-строитель тата бухгалтер кирлӗ. Хваттер параҫҫӗ. Ҫак адреспа ыйтмалла: г. Чебоксары, Дом Советов, 5 этаж, комната № 511. 2—1.

Завода ҫакӑн пек работниксем кирлӗ: технологсем, ОРС валли главнӑй бухгалтер, секретарь-машинисткӑсем, шутпа контора работникӗсем, кладовщиксем тата ҫакӑн пек рабочисем: токарьсем, фрезеровщиксем, револьверщиксем, слесарьсем, гальваниксем, волочильщиксем, штамповщиксем, электромонтерсем, контролерсем, строительнӑй рабочисем, уборщицӑсем, подсобнӑй рабочисем тата курьерсем.

Вахтерсем (охранниксем), арҫынсемпе хӗрарӑмсем, тата пушартан сыхлакан работниксем кирлӗ. Хваттер параҫҫӗ.

Заводӑн транспорт цехне ҫакӑн пек работниксем кирлӗ: рулевой е моторист-рулевой, моторсем, поездсем пухса хатӗрлекенсем, сцепщиксем, стрелочниксем, шоферсем, мотовозсем, вагонсене пӑхакансем, ҫул рабочийӗсем, грузчиксем тата возчиксем. Общежити параҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех тата урӑх квалификацие вӗренес текенсене (14 ҫула ҫитнӗ е унтан иртнӗ ҫынсене) илеҫҫӗ.

Ҫак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Карла-Маркса, 80. Бюро пропусков. Кулленех 11 сехетрен пуҫласа 3 сехетчен ыйтма юрать. 5—1.

Ильинкӑри хӑйне уйрӑм каpу суртне ялан ӗҫлеме васкавлӑн опытлӑ бухгалтер кирлӗ. Хваттер параҫҫӗ тата апатлантараҫҫӗ. Ҫак адреспа ыйтмалла: пос. Ильинка, Сундырского района, Чувашской АССР.

Россглаввинон Шупашкарти эрех комбинатне ялан ӗҫлеме химик-лаборант тата инженер-строитель кирлӗ. Ҫак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная слобода, 21, Россглаввино. 3—1.

Шупашкарти сӑра заводне опытлӑ химик-лаборант кирлӗ. Хваттер параҫҫӗ. Столовӑй пур. Ҫак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, Ленинградская, 35, Контора пивзавода

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0— 67, заместительпе секретарӗн — 4— 26, парти пурнӑҫ пайӗн — 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00516 Типографи №1. Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.